Пирĕн интервью

# Заказсем вырнаçтарасси пирки

***Юлашки вăхăтра пурнăçра пурне те пырса тивекен çĕнĕлĕхсем сахал мар. Вĕсем Федераллă казначействăн ĕçĕ-хĕлĕнче те палăрмаллах. Çавна май район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ Федераллă казначействăн Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн ертӳçипе Н.В. ЛАНЦЕВПА тĕл пулса ку çĕнĕлĕхсем пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтнă.***

**– 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Федераллă казначейство ĕç тăвакан федераллă влаç органĕ пулса тăрать. Çавна май заказсене вырнаçтарнин итогĕсемпе Раççей Федерацийĕ ячĕпе тунă патшалăх контракчĕсен реестрне туса пырассине ăна шанса параççĕ. Бюджет учрежденийĕсен таварсем туяннă, ĕçсем тата услугăсем пурнăçлаттарнă (заказсем вырнаçтарнă) чух мĕн пĕлмелле-ха?**

– Вăрттăнлăх мар, бюджет сферинче реформăсем анлă сарăлнă. Енчен те иртнĕ çулхи тĕп событи вăл бюджет учечĕн инструкцине ĕçе кĕртни пулса тăнă пулсан, 2006 çулта вара çĕнĕ енсенчен пĕри 2005 çулхи июлĕн 21-мĕшĕнче йышăннă, 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ 94-ФЗ номерлĕ «О размещении заказов на поставки товаров, выполнение работ, оказание услуг для государственных и муниципальных нужд» Федераллă Саккун пулса тăчĕ. Ку саккун бюджет укçи-тенкипе кăна мар, бюджетпа çыхăнман çăл куçсемпе те таварсемпе тивĕçтерессипе, ĕçсемпе услугăсем пурнăçлассипе çыхăннă хутшăнусене йĕркелесе пырать. Çав саккунпа килĕшӳллĕн таварсем туянассине, ĕçсем тата услугăсем пурнăçлаттарассине заказсем вырнаçтарса кăна туса пымалла. Анчах та çĕнĕ саккун пурнăça кĕнĕ май патшалăх тата муниципаллă учрежденисем поставщиксемпе тата подрядчиксемпе расчетсем тăвассипе çыхăннă нумай нормативлă тата право акчĕсене те улăштарма тата улшăнусем кĕртме тивнĕ.

2006 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче 19-ФЗ номерлĕ «О внесении изменений в некоторые законодательные акты РФ и признании утратившими силу отдельных положений законодательных актов РФ в связи с принятием Федерального Закона «О размещении заказов на поставки товаров, выполнение работ, оказание услуг для государственных и муниципальных нужд» Федераллă Саккун кун çути курчĕ.

**– Патшалăх закупкисем çинчен калакан мĕнле хутшăнусене пырса тивет-ха тата пĕр поставщикпа (подрядчикпа) расчет тумалли шай мĕнлерех?**

– 94–ФЗ Федераллă Саккун поставщиксемпе тата подрядчиксемпе туса ирттерекен укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчи хутшăнусене пырса тивет. Кунта пĕр йышши таварсем тăратнине, пĕр йышши ĕçсем е услугăсем пурнăçланине кĕртмелле. Анчах та укçа-тенкĕпе усă курнин калăпăшĕ Раççей Федерацийĕнче наличнăй укçа-тенкĕпе юридициллă лицосем пĕр хутшăнура усă курма Раççей Федерацийĕн Тĕп банкĕ палăртнă калăпăшран иртмелле мар. Ку вăл 60 пин тенкĕпе танлашать. Апла пулсан пĕр квартал хушшинче пĕр йышши таварсемпе, ĕçсемпе тата услугăсемпе тивĕçтерме заказсем 60 пин тенкĕ ытла суммăлăх тăратаççĕ пулсан, должноçри çынсем ответ тытма тивĕç.

**– Пĕр йышши таварсем, ĕçсем, услугăсем тени мĕне пĕлтерет-ха?**

– Ăна тĕрлĕрен ăнлантарма пулать. Раççей Экономика аталанăвĕн министерстви тавара палăртмалли пĕтĕмĕшле принципсене (сăмахран, Р 51303-99 «Торговля. Термины и определения» ГОСТра усă кураканнисене) тата Раççей Патшалăх статистикин 2002 çулхи мартăн 25-мĕшĕнчи 23-мĕш номерлĕ «Об утверждении «Основных положений о порядке наблюдения за потребительскими и тарифами на товары и платные услуги, оказанные населению, и определения индекса потребительских цен» постановленине тĕпе хума май пур тесе шутлать.

Кунтан çакă курăнать. Пĕр йышши таварсем, ĕçсем тата услугăсем тесе хăйсен техника тата функци характеристикисемпе пĕр пеккисене, потребительство тĕлĕшпе пĕр тытăмлисене калаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринчен кăшт кăна, пахалăх тĕлĕшпе витĕм кӳмен уйрăмлăхсемпе уйрăлса тăма пултараççĕ.

**– Тархасшăн, заказсене вырнаçтармалли мелсем пирки тĕплĕнрех каласа парсамăр.**

– 94–ФЗ Федераллă Саккунăн 10-мĕш статйин 1-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн заказсене çапла майпа вырнаçтараççĕ:

– конкурс, аукцион формипе торгсем ирттерсе;

– торгсем ирттермесĕр (котировкăсен запросĕ, пĕртен-пĕр поставщикран (исполнительтен, подрядчикран) илнĕ чух, тавар биржисенче.

Котировкăсем ыйтса илнипе учреждени пĕр йышши таварсен (ĕçсен, услугăсен) партине 250 пин тенкĕрен ытла мар заказ вырнаçтарма пултарать. Вĕсен пĕр квартал хушшинче тӳлесе татмалла. Котировкăсем ыйтса илсе учреждени заказсене поставщикпа килĕшӳ 60 пин тенкĕрен ытла суммăлăх тунă чухне вырнаçтарма тивĕç тата çав суммăлăх пĕр квартал хушшинче пĕр йышши таварсем туяннă, ĕçсемпе услугăсем пурнăçлаттаранă чух. Учредени хăй тĕллĕнех потенциаллă поставщиксемпе подрядчиксене заказсем вырнаçтарасси пирки пĕлтерет, таварсемпе ĕçсен тата услугăсен хакĕсем пирки ыйтса пĕлет. Заказсем валли тĕп требованисене çаксене палăртнă:

– таварсен ячĕ, характеристики тата унăн калăпăшĕ;

– таварсене илсе пымалли вырăн тата унăн срокĕсем;

– контрактăн чи пысăк хакĕ.

Учреждени заказчик-учреждени заявкисене пăхса тухать, чи юрăхлă варианта суйласа илет те çĕнтерӳçĕне палăртать, унпа контракт çырать.

Халĕ заказсене вырнаçтармалли пĕрремĕш вариант пирки кĕскен. Енчен те поставщикпа е подрядчикпа тума хатĕрленекен контракт сумми пĕр ĕçпе кварталта 250 пин тенкĕ ытла пулсан, учреждени конкурс ирттерме тивĕç. Учреждени таварсем (услугăсем, ĕçсем) туянма хатĕрленнĕ май заказăн тĕп требованийĕсене палăртать:

– таварсен, услугăсен, ĕçсен потребитель пахалăхне палăртни;

– таварсемпе тивĕçтермелли, услугăсемпе ĕçсем пурнăçламалли йĕрке.

Конкурс документацине хатĕрлет те конкурс ирттерессине пĕлтерет. Конкурса хутшăнакансен заявкисене пăхса тухать. Конкурса хутшăнма кăмăл тунисен заявкисене танлаштарса пăхса хаклать, конкурс çĕнтерӳçине палăртать, унпа контракт тăвать.

Аукцион ирттерес процедура нумай енчен конкурс ирттерессипе пĕр евĕрлĕ. Анчах та аукцион çĕнтерӳçи контрактăн чи пĕчĕк суммине сĕнекен пулса тăрать.

МИРОНОВ

Михаил Алексеевич

После долгой и продолжительной болезни ушел из жизни Михаил Алексеевич Миронов, бывший руководитель ветеринарной службы района, заслуженный ветеринарный врач Чувашской АССР.



Он родился 8 января 1934 года в д. Нагорная Ядринского района Чувашской Республики. После окончания Казанского Государственного ветеринарного института им. Баумана по специальности ветеринарный врач с 1958 года работал заведующим Хочашевского ветеринарного участка Ядринского района. С сентября 1965 года переведен главным ветеринарным врачом Моргаушского района - начальником Моргаушской районной станции по борьбе с болезнями животных. На этой должности он работал бессменно в течение 34 лет, ушел на заслуженный отдых в 1999 году. За период работы Михаил Алексеевич награжден орденами “Трудового Красного Знамени”, “Знак Почета”, медалями “За доблестный труд”, “Ветеран труда”. Указом Президиума Верховного Совета Чувашской АССР ему присвоено звание “Заслуженный ветеринарный врач Чувашской АССР”. В 1970 году удостоен бронзовой медали ВДНХ, неоднократно награждался знаками “Победитель социалистического соревнования”, “Ударник 9-й пятилетки”, “Отличник гражданской обороны СССР”. Вел активную общественную работу среди специалистов и населения.

Память о Михаиле Алексеевиче Миронове, специалисте ветеринарного дела, талантливом руководителе, чутком и душевном человеке навсегда сохранится в наших сердцах. Мы скорбим о его безвременной кончине, выражаем глубокое соболезнование всем его близким и родственникам

**Иванов Ю. А.**
**Данилов В. Г.**
**Иванов А. Н.**
**Никитин В. Г.**
**Яковлев Н. С.**
**Афанасьев С. А.**
**Вязов В. И.**
**Григорьева Ф. Ф.**
**Давыдов П.П.**
**Краснов В. С.**
**Павлова М. И.**
**Рубцов В. М.**
**Софронов Л. С.**

Сăвă йĕркисем

## Савап илемшĕн кĕр кунне

Кĕр илемлĕ, сарă çулçăсем
Вĕлкĕшсе ӳкеççĕ çĕр çине.
Вĕт çумăрăн çутă пĕрчисем
Йĕпетеç пĕр шелсĕр вĕсене...
Карталаннă хур кайăкĕсем
Сас парса вĕçеççĕ кăнтăра.
Шĕл кăвар пек хĕрлĕ пилешсем–
Пăлхану та савăнăç чунра.
Тек вăрман та янрамасть паян,
Пурпĕрех туртать вăл хăй патне.
Кĕр çитнишĕн, тусăм, ан кулян,
Хăв пĕлен, эп - тулăх кĕркунне!..
Çил салатрĕ çумăр пĕлĕтне,
Хĕвеле хăтарчĕ «тыткăнран».
Çук, сапмасть хĕвелĕ ăшшине
Çуллахи пек пĕтĕм кăмăлтан.
...Кĕр илемлĕ, сарă çулçăсем
Вĕлкĕшсе ӳкеççĕ çĕр çине.
Хĕл çитсен те кĕрĕн кунĕсем
Асилсен вăй хушĕç чĕрене!

**Игорь МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.

Уйкас Янасал ял тăрăхĕн администрацийĕн коллективĕ И.В. Михеев депутатăн хĕрĕ
**Надежда Игоревна**
**ПЕТРОВА**
сарăмсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти ветеринари станцийĕн коллективĕ кунта 34 çул хушши ертӳçĕре ĕçленĕ
**Михаил Алексеевич**
**МИРОНОВ**
нумай вăхăт йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ
**Вячеслав Иванович**
**ЕГОРОВ**
вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Росгосстрах» уйрăмĕ нумай çул çак системăра ĕçленĕ, Лантăш ялĕнче пурăннă
**Евгений Максимович**
**МАКСИМОВ**
вăрçăпа ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки хурланни çинчен пĕлтерет.

ГИБДД асăрхаттарать

## Тимлĕ пулни инкекрен хăтарĕ

Районти автоçулсем çинче аварисем пуласси çав-çавах чакмасть-ха. Çакна иртнĕ тапхăр кăтартăвĕсем те çирĕплетсе параççĕ. Кăçалхи сакăр уйăх хушшинче вăтăр тăхăр инкек пулнă, вĕсенче аллă икĕ çын аманнă, вунпĕр çын кун-çулĕ татăлнă.

Иртнĕ çулхи çак тапхăрта вара вăтăр тăвата авари пулнă, сакăр çын вилнĕ, аллă иккĕшĕ аманнă.

Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, водительсем ӳсĕррине пула авари пуласси икĕ хут чакрĕ. Çав вăхăтрах транспорт хытă çӳренипе инкек шучĕ çиччĕрен вун икке çитрĕ.

Час-часах ачасем инкеке лекеççĕ. Кăçал ачасемпе çыхăннă инкексем çул çинче тăваттă пулнă, вĕсенче тăваттăшĕ аманнă. Вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче çакна асăрхаттарас тĕллевпе ачасене çул çинче тимлĕрех пулма сĕнетĕп.

Августăн çирĕммĕшĕнче – сентябрь вуннăмĕшĕнче “Автобус” операцин пĕрремĕш тапхăрĕ иртрĕ. Операци вăхăтĕнче икĕ водителе çул-йĕр правилисене пăхăнманшăн тытса чарнă, вунă шкул автобусне тĕрĕсленĕ. Сентябрь вунсаккăрмĕш – октябрьĕн виççĕмĕшĕнче “Автобус” операцин иккĕмĕш тапхăрĕ иртет. Çак операци вăхăтĕнче çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕпе транспорт инспекцийĕ пассажирсене турттаракан предприятисене тата маршутлă автобуссем çӳрекен çулсене тĕрĕслеççĕ.

Сеньтябрь уйăхĕ çул-йĕр çинчи инкекрен пуçланчĕ. Сентябрĕн пĕрремĕшĕнче 10 сехет иртни 45 минутра “Волга” çулăн 606 километрĕнче, Петров Александр Павлович, 1965 çулта çуралнăскер, Çĕрпӳ районĕнче пурăнакансскер, ГАЗ-32282 автомашинăн малти урапи шăтнипе кювета çаврăнса ӳкнĕ. Автомашина водителĕ тата пассажирĕ В.И. Николаев больницăна лекеççĕ.

Районти çул-йĕр инспекцийĕ çул çинче тимлĕрех пулма ыйтать.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.**

Спорт

## Наци кросĕ – 2006

**Сентябрĕн 17-мĕшĕнче** Шупашкарта “Наци кросĕ – 2006” пулать. Пирĕн районтан 20 çын аслă çулхисем, 80 ача Муркаш, Ярапайкасси, Калайкасси, Сосновка шкулĕнче вĕренекенсем хутшăнĕç.

17 çула çитменнисен сывлăха хаклакан врач ирĕк панă справка, 18 çултисен тата аслăраххисен справка е карточка çине алă пусни пулмалла.

6 километрлă дистанцире 1987 çулхи тата кĕçĕнрех хĕрсем ăмăртаççĕ.

8 километрлă дистанцире – 1987 çулхи тата кĕçĕнрех яшсем, 1986 çулхи тата аслăрах хĕрарăмсем.

12 километрлă дистанцире – 1986 çулхи тата аслăрах арçынсем.

4 километрлă дистанцире – 1987 çулхи тата кĕçĕнрех хĕр ачасем, 1987 çулхи тата кĕçĕнрех яшсем, 1986 çулхи тата аслăрах хĕрарăмсем, 1986 çулхи тата аслăрах арçынсем.

1 е 2 километрлă дистанцире – 1997 çулхи тата кĕçĕнрех хĕрачасем, 1997 çулхи тата кĕçĕнрех арçын ачасем.

2014 метрлă дистанци – VIP чупу

Ăмăртура мала тухнисем медальсене, дипломсемпе асăнмалăх парнесене, сувенирсене тивĕçĕç.

“Наци кросĕ – 2006” çĕнтерӳçисем Гран-при чупăвне хутшăнĕç.

---

Çавăн пекех **сентябрĕн 16-мĕшĕнче** ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем хушшинче Олимп чемпионкин В. Егорован парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетика кросĕ Муркаш стадионĕнче 11 сехетре пуçланать.

Çак кун шкул ачисем те старта тухаççĕ.

**М. РОМАНОВ.**

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3334.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 05.09.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.А.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.